ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ХУЛА СТРОИТЕЛЬСТВИН ЁÇ-ХЁЛНЕ ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче хула строительствин ĕç-хĕлне йĕркелесси çинчен" 2007 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 11 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2007, 73 №; 2008, 77 №; 2009, 80 №; 2010, 85 №; 2011, 91 №; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 12 №; 2015, 9 №; 2016, 3, 12 №-сем; 2017, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000251 №; "Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2024, ака уйăхĕн 10-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 4 статьяра:

а) 2-мĕш пунктра "патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан чи аслă органĕсемпе" сăмахсене "ĕç тăвакан чи аслă органĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2^1-мĕш пунктра "патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан чи аслă органĕсемпе" сăмахсене "ĕç тăвакан чи аслă органĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

б) çакăн пек çырса 9^3-мĕш пункт хушса хурас:

"9^3) Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Муркаш муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕрпӳ муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хули хула округĕн тата Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочийĕсене, вĕсене Раççей Федерацийĕн Хула строительствин кодексĕпе муниципаллă округсен, хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне кĕртнĕ, Чăваш Республикин "Хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 57 №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн пурнăçлать;";

2) 5^1 статьян 2-мĕш пайĕнче:

а) 1-мĕш пунктра:

иккĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"проектпа пăхнă груз турттармалли калăпăшĕ талăкне 30 пин тоннăран сахалрах шайпа танлашакан пурте усă курман чукун çулсене, пурте усă курман чукун çулсене технологилле çыхăнтарнă чухне тăвакан тата (е) юсаса çĕнетекен чукун çул станцийĕсене, чукун çул вокзалĕсене;";

виççĕмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

тăваттăмĕш абзацра "вертолет площадкисене" сăмахсене "Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнче шутланакан вертодромсене" сăмахсемпе улăштарас;

пиллĕкмĕш абзацра "комплексĕсене," сăмаха "проектпа пăхнă груз тиесе пушатмалли калăпăшĕ çулталăкне 500 пин тоннăран сахалрах шайпа танлашакан, грузсене пĕр транспортран тепĕр транспорта тиесе пушатакан центрĕсене тата" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 2-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"2) Федерацин "Раççей Федерацийĕнчи автомобиль çулĕсем çинчен тата çул-йĕр ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тата Раççей Федерацийĕн уйрăм саккунĕсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕнчи

257-ФЗ №-лĕ саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн автомобиль çулĕсен тĕп çуллйĕр тытăмне кĕрекен пурте усă куракан автомобиль çулĕсен переченьне кĕртмен регион е муниципалитетсем хушшинчи пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсене;";

б) 4-мĕш тата 5-мĕш пунктсене çакăн пек çырса хурас:

"4) вĕренӳ сферине кĕрекеннисене:

Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан патшалăх организацийĕсем, Чăваш Республикин хушма пĕлӳ паракан патшалăх организацийĕсем (кадет шкулĕ, сывлăх тĕлĕшĕнчен хавшак ачасене вĕрентекен шкул, сывлăх тĕлĕшĕнчен хавшак ачасен интернат шкулĕ, ачасене хушма пĕлӳ паракан центр) вырнаçнă (вĕсен территорийĕнче вырнаçнă) объектсене;

Чăваш Республикин професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕренӳ организацийĕсем, Чăваш Республикин професси енĕпе хушма пĕлӳ паракан патшалăх вĕренӳ организацийĕсем (училище, колледж, техникум) вырнаçнă (вĕсен территорийĕнче вырнаçнă) объектсене;

Чăваш Республикин патшалăх вĕренӳ организацийĕсен тата вĕсен филиалĕсен общежитийĕсен çурчĕсене, аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсемсĕр пуçне;

5) сывлăх сыхлавĕ тата социаллă пулăшу парас ĕç сферине кĕрекеннисене:

медицина пулăшăвне (санаторипе курорт пулăшăвĕсĕр пуçне) стационар условийĕсенче паракан Чăваш Республикин патшалăхăн сиплевпе профилактика медицина организацийĕсене, вĕсен тытăмĕнчи уйрăм тăран пайсене (больница (çав шутра ача-пăча больници), госпиталь, хоспис, вырăнпа выртакансене медицина сестрисем пăхса тăракан çурт (больница);

медицина пулăшăвне амбулатори тата (е) кăнтăрлахи стационар условийĕсенче паракан Чăваш Республикин патшалăхăн сиплевпе профилактика медицина организацийĕсене (поликлиника (çав шутра ача-пăча поликлиники), стоматологи поликлиники (çав шутра ача-пăча стоматологи поликлиники), хĕрарăм консультацийĕ);

Чăваш Республикин патшалăхăн уйрăм йышши медицина организацийĕсене (медицинăпа социаллă пурнăç экспертизин бюровĕ, медицина статистикин бюровĕ, патологипе анатоми бюровĕ, суд-медицина экспертизин бюровĕ, лабораторисем);

донор юнне тата (е) унăн компоненчĕсене хатĕрлес, упрас енĕпе ĕçлекен Чăваш Республикин патшалăх медицина организацийĕсене (юн яракан станцисем);

малтанхи медицинăпа санитари пулăшăвне паракан Чăваш Республикин патшалăхăн медицина организацийĕсене, вĕсен тытăмĕнчи уйрăм тăран пайсене (врач амбулаторийĕ, пĕтĕмĕшле практика врачĕн (çемье медицинин) центрĕ (офисĕ), фельдшерпа акушер пункчĕ, фельдшер пункчĕ);

васкавлă медицина пулăшăвĕ паракан Чăваш Республикин патшалăх медицина организацийĕсене, вĕсен тытăмĕнчи уйрăм тăран пайсене (васкавлă медицина пулăшăвĕ паракан медицина организацийĕсем – васкавлă медицина пулăшăвĕн станцийĕсем);

Чăваш Республикинчи патшалăхăн фармацевтика организацийĕсене (аптекăсем);

санаторипе курорт объекчĕсене (санаторисем), вĕсене вырнаçтарассине Чăваш Республикин патшалăх программисемпе пăхса хăварнă е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене пăхăнса тăракан социаллă пурнăçпа сывлăха çирĕплетмелли центрсене;

халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен Чăваш Республикин патшалăх организацийĕсене тата объекчĕсене, çав шутра тăлăх ачасен тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасен организацийĕсене, социаллă пурнăçпа реабилитаци центрĕсене, ватă çынсемпе инвалидсен социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрсене, халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăсене, Чăваш Республикин социаллă пулăшу паракан ытти объекчĕсене (вĕсене туса хурасси çинчен Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем йышăну тунă);";

в) 9-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

г) 10-мĕш пунктра:

иккĕмĕш абзацра "110 (150) кВ" сăмахсене "110 кВ, Раççей Федерацийĕн территорине планламалли схемăсенче кăтартмалли электричество парса тăракан линисемсĕр пуçне" сăмахсемпе улăштарас;

тăваттăмĕш абзацра "110 (150) кВ" сăмахсене "110 кВ, Раççей Федерацийĕн территорине планламалли схемăсенче кăтартмалли подстанцисемсĕр пуçне" сăмахсемпе улăштарас;

3) 10 статьяра:

а) 6^1-мĕш пайра:

иккĕмĕш предложенине "халăх пурăнакан вырăнсен чиккисен (çав шутра йĕркеленекен ял-хула чиккисен) карттисенче кăтартакан, тĕп плансене (малалла тивĕçлĕн – уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕ, уйрăм муниципаллă пĕрлĕх), Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Муркаш муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕрпӳ муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Шупашкар муниципаллă округĕн, Чăваш Республикин Çĕнĕ Шупашкар хули хула округĕн тата Чăваш Республикин Шупашкар хули хула округĕн территорийĕсем тĕлĕшпе Чăваш Республикин "Хула строительствин ĕç-хĕлĕ енĕпе пурнăçламалли уйрăм полномочисене Чăваш Республикин муниципаллă уйрăм пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тата Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем хушшинче çĕнĕрен пайласси çинчен" 2024 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 57 №-лĕ саккунĕн 4 статйин 4-мĕш пайĕн положенийĕсене шута илсе туса хатĕрлекен тĕп плансемсĕр пуçне, кĕртекен" сăмахсем хушса хурас;

çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Полномочиллĕ орган çавăн пекех халăх пурăнакан вырăнсен чиккисен (çав шутра йĕркеленекен ял-хула чиккисен) карттисенче кăтартакан, уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен тĕп планĕсене кĕртекен халăх пурăнакан вырăнсен чиккисен текст сăнлавне туса хатĕрлеме пултарать.";

ă) 12-мĕш пая "муниципалитет" сăмах хыççăн "(патшалăх)" сăмах хушса хурас;

б) 13-мĕш пая ", уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен тĕп планĕсен проекчĕсемсĕр пуçне" сăмахсем хушса хурас;

в) çакăн пек çырса 13^1-мĕш пай хушса хурас:

"13^1. Уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проектне туса хатĕрленĕ чухне текст материалĕсен, карттăсен содержанине, йышне проекта хатĕрлекенĕ патшалăх заказчикĕпе туса хатĕрлекен проектăн уйрăмлăхĕсене шута илсе калаçса килĕшнĕ тăрăх тӳрлетӳсем кĕртме пултарать.";

4) 10^1 статьян 2-мĕш пайĕнче:

а) 2-мĕш пунктăн тăваттăмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

ă) 4-мĕш пунктра:

виççĕмĕш абзацра "спорт енĕпе хатĕрлекен муниципаллă центрсен," сăмахсене кăларса пăрахас;

вун пĕрмĕш абзац хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

б) 7-мĕш пунктăн иккĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

в) 9-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

5) 11 статьяра:

а) 1-мĕш пая "улшăнусем" сăмах хыççăн ", уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проектне туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăнусăр, çавăн пекех унта улшăнусем кĕртмелли сĕнӳсене туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăнусăр пуçне," сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса 1^1-мĕш пай хушса хурас:

"1^1. Уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проектне туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăнăва, çавăн пекех унта улшăнусем кĕртмелли сĕнӳсене туса хатĕрлесси çинчен калакан йышăнăва полномочиллĕ орган тăвать.";

б) 2-мĕш пайра "хула округĕн" сăмахсем хыççăн ", уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти администрацийĕсемсĕр пуçне," сăмахсем хушса хурас, "патшалăх" сăмаха "муниципалитет" сăмахпа улăштарас;

в) çакăн пек çырса 2^1-мĕш пай хушса хурас:

"2^1. Уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проектне е унта улшăнусем кĕртесси çинчен калакан проекта полномочиллĕ орган хăй тĕллĕн туса хатĕрлет е тата вĕсене Раççей Федерацийĕн патшалăх тата муниципалитет нушисем валли таварсем, ĕççем, пулăшу ĕçĕсем туянас енĕпе контракт тытăмĕ çинчен калакан саккунĕсемпе килĕшӳллĕн тунă патшалăх контрактне тĕпе хурса вăл явăçтаракан ытти сăпатсем туса хатĕрлеççĕ.";

г) 7-мĕш пая "тĕп планĕн" сăмахсем хыççăн ", уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проекчĕсĕр пуçне," сăмахсем хушса хурас;

д) çакăн пек çырса 7^1-мĕш пай хушса хурас:

"7^1. Интересленекен çынсем уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планĕн проекчĕ тĕлĕшпе хăйсен сĕнĕвĕсене полномочиллĕ органа тăратма пултараççĕ.";

е) 10-мĕш пайра "муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти администрацийĕн пуçлăхне" сăмахсене "муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти администрацийĕсен пуçлăхĕсене, уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти администрацийĕсен пуçлăхĕсемсĕр пуçне," сăмахсем хушса хурас;

ĕ) çакăн пек çырса 10^1-мĕш пай хушса хурас:

"10^1. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсем, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем, Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, интересленекен уйрăм çынсем тата юридически сăпатсем полномочиллĕ органа

уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан сĕнӳсем тăратма пултараççĕ.";

ж) 11-мĕш пая "хула округĕн вырăнти администрацийĕ" сăмахсем хыççăн ", уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти администрацийĕсемсĕр пуçне," сăмахсем хушса хурас.";

з) çакăн пек çырса 11^1-мĕш пай хушса хурас:

"11^1. Уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан сĕнӳсене илнĕ кунран пуçласа вăтăр кун хушшинче полномочиллĕ орган асăннă сĕнӳсене тăратнă субъекта çирĕплетнĕ йышăну çинчен пĕлтерекен информацие ярса парать, унта уйрăм муниципаллă пĕрлĕхĕн тĕп планне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан йышăну проектне туса хатĕрлемелли сроксене, ĕçсене укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли условисене, пĕрле туса хатĕрлесси тата пĕрле укçа-тенкĕ уйăрасси çинчен калакан сĕнӳсене, ĕçсене йĕркелемелли ытти ыйтусене палăртса уçăмлатаççĕ, е çирĕплетсе панă хирĕçленине тăратать.";

и) 13^1-мĕш пая "Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе" сăмахсем хыççăн ", полномочиллĕ органпа (енчен те уйрăм муниципаллă пĕрлĕхсен тĕп планĕсене кĕртекен, халăх пурăнакан вырăнсен чиккисен (çав шутра йĕркеленекен ял-хула чиккисен) карттисенче кăтартакан халăх пурăнакан вырăн (халăх пурăнакан вырăнсен) чиккисем çĕр лаптăкĕсен чиккисем урлă иртнине пĕтермелле пулсан)" сăмахсем хушса хурас;

6) 14 статьян 1-мĕш пайне "Чăваш Республикинче пурăнакан халăхăн республика пĕлтерĕшлĕ ытти объекчĕсемпе" сăмахсем хыççăн ", пушар деповĕн çурчĕсемпе" сăмахсем хушса хурас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2025 çулхи ака уйăхĕн 29-мĕшĕ
21 №

Управление делопроизводства № 1